27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
март
7
юнкун
44(6795) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшман ҫарӗсене икӗ арне хушши хупӑрласа хӗссе пырса, вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкине ҫапса аркатнӑ та паян, мартӑн 6-мӗшӗнче, ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулине крепоҫне—нимӗҫсен ВИСЛА шывӗн анатри тӑрӑхӗнчи оборонин хӑватӑ узелне туртса илнӗ.

Ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра ГРУДЗЯНДЗ хулинче фронт ҫарӗсем нимӗҫсен крепость комендантӗ Фрикке генерал-майорпа унӑн штабӗ пуҫпулса тӑракан салтакӗсемпе офицерӗсене 5.000 ҫынна ытла тыткӑна илнӗ, ҫавӑн пекех тата хӗҫпӑшалсемпе ҫар пурлӑхӗсем нумай тытса илнӗ.

ГРУДЗЯНДЗ хулипе крепоҫне туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникӑн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантӑн, ХАБАРОВ генерал-майорӑн, РАХИМОВ генерал-майорӑн, ЯКУШЕВ генерал-майорӑн, СОННИКОВ полковникӑн, ГАЙФУТДИНОВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн РОГОЗИНАН, артиллери генерал-майорӗн ПЯДУСОВАН, БОНДАРЕВ полковникӑн, ТУРОВЕРОВ полковникӑн, СОЛОВЬЕВ полковникӑн, БЕСПАЛОВ подполковникӑн, БОНДАРЕНКО подполковникӑн, ГНИДИН полковникӑн, ДЕГТЯРЕНКО полковникӑн артиллеристӑсем; МИРОНОВИЧ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн КИСЕЛЕВАН, ИГОНИН полковникӑн, ПАРШЕВ подполковникӑн, ЖАБИН майорӑн танкистӑсем; авиаци генерал-лейтенантӗн ОСИПЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНАН, ТИХОМИРОВ полковникӑн, КАЛУГИН полковникӑн, СМОЛОВИК полковникӑн, ВУСС полковникӑн, ДОДОНОВ полковникӑн, ПОКАЕВОЙ полковникӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, БЕРШАНСКАЯ подполковникӑн летчикӗсем; АЛЕКСАНДРОВ подполковникӑн, ВИЗИРОВ полковникӑн, ШИТИКОВ полковникӑн, АБРАМОВИЧ майорӑн, БАЛАБАСОВ майорӑн, МОНАХОВ майорӑн, ЩУКЛИН майорӑн, СИТКОВ подполковникӑн саперӗсем; БАХИЛИН полковникӑн связистӑсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, ГРУДЗЯНДЗ хулипе крепоҫне туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «ГРУДЗЯНДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 6-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ГРУДЗЯНДЗ хулипе крепоҫне туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ГРУДЗЯНДЗ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, пиҭӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартӑн 6-мӗшӗ. № 291.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступлени малалла вӑйлатса пырса, паян, мартӑн 6-мӗшӗнче БЕЛЬГАРД, ТРЕПТОВ, ГРАЙФЕНБЕРГ, КАММИН, ГЮЛЬЦОВ, ПЛАТЕ хулисене—ҫулӗрсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен Хӗвеланӑҫ Померанири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене туртса илнӗ.

Асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: СИМОНЯК генерал-лейтенантӑн, БУКШТЫНОВИЧ генерал-майорӑн, ПЕРЕВЕРТКИН генерал-майорӑн, КАЗАНКИН генерал-лейтенантӑн, ШАТИЛОВ генерал-майорӑн, КОЗИН генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ШАФАРЕНКО генерал-майорӑн, НЕГОДА полковникӑн ҫарӗсем; КОНСТАНТИНОВ генерал-лейтенантӑн, КОБЛОВ генерал-майорӑн, ЧАЛЕНКО генерал-майорӑн, БЕЛОВ генерал-майорӑн кавалеристӑсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн БОГДАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КАТУКОВАН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенантӗн ШАЛИНАН, ДРЕМОВ генерал-майорӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВЕДЕНЕЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ТЕЛЯКОВАН, БАБАДЖАНЯН полковникӑн, ТЕМНИК полковникӑн, АНФИМОВ полковникӑн, СМИРНОВ подполковникӑн, КОПЫЛОВ полковникӑн, ЧЕРЯПКИН полковникӑн, ПОТАПОВ полковникӑн, ШАМАРДИН полковникӑн, АБРАМОВ полковникӑн, МАКАРОВ подполковникӑн, ПАВЛУШКО полковникӑн, ОХМАН полковникӑн танкистӑсем; артиллери генерал-майорӗн ПЛАСКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ФРОЛОВАН, артиллери генерал-майорӗн МОРОЗОВАН, ШУБИН полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ПЫЛИНАН, ИВАНОВ полковникӑн, БЕКЕСОВ майорӑн, ГОРОБЕЦ подполковникӑн, ОСТРЕЙКО полковникӑн артиллеристӑсем; авиаци генерал-лейтенантӗн САВИЦКИН, авиаци генерал-майорӗн ТАТАНАШВИЛИН, НАКОНЕЧНИКОВ подполковникӑн, БЕЛОУСОВ полковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, ОРЛОВ полковникӑн летчикӗсем; БЕЛЬСКИЙ полковникӑн, ХАРЧЕВИН полковникӑн, ЗАХАРОВ полковникӑн, ВАНДЫШЕВ полковникӑн, ПИВОВАРОВ полковникӑн саперӗсем; СМОЛИЙ полковникӑн, ЗАХАРОВ подполковникӑн, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн АКИМОВАН, БЕЛЕНКО полковникӑн, БОНДАРЕВ полковникӑн связистӑсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, БЕЛЬГАРД, ТРЕПТОВ, ГРАЙФЕНБЕРГ, КАММИН, ГЮЛЬЦОВ, ПЛАТЕ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 6-мӗшӗнче, 22 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫулерехре асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, Померанири асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, пиҭӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартӑн 6-мӗшӗ. № 292.

Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунӗ—Мартӑн 8-мӗшӗ ҫинчен

ВКП(б) Центральный Комитечӗ йышӑннӑ постановлени

Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунне — Мартӑн 8-мӗшне Совет Союзӗнчи хӗрарӑмсем кӑҫалхи ҫул Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнӗ, аслӑ ҫӗнтерӳсем туса пынӑ вӑхӑтра уявлаҫҫӗ. Совет ҫарӗсем нимӗҫ пусмӑрҫисене хамӑр ҫӗр ҫинчен хӑваласа кӑларчӗҫ те халӗ тӑшмана Германи ҫӗрӗ ҫинче аркатса пыраҫҫӗ.

Совет хӗрарӑмӗсем, вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлесе, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене аркатса тӑкса историлле ҫӗнтерӳсем тӑвас ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара пулӑшаҫҫӗ. Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ хӗрӗсем—работницӑсемпе колхозницӑсем, инженерсемпе техниксем, агрономсемпе зоотехниксем, наукӑпа искусство работникӗсем, врачсемпе учительницӑсем, совет учрежденийӗсенче ӗҫлекенсем—Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсемпе пӗлӗвӗсене тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫе параҫҫӗ. Совет хӗрарӑмӗсем, производствӑра хӑйсен упӑшкисемпе, ашшӗсен, ывӑлӗсемпе тӑванӗсен вырӑнӗсене йышӑнса, авалтан арҫын профессийӗсем тесе шутланакан профессисене вӗренсе алла илме хатӗр тӑнине тата хӑйсен пултарулӑхне ӗҫре кӑтартса пачӗҫ, вӗсем фабрикӑсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи ӗҫӗн тӗп ӗмыврӑлӑхне хӑйсем тӳссе ирттереҫҫӗ.

Совет хӗрарӑмӗсем — работницӑсем пирӗн социализмлӑ промышленноҫӑн аслӑ вӑйӗ пулса тӑраҫҫӗ. Ҫар заводӗсенче, электростанцисенче, нефть промыслисенче, чугун ҫулсем ҫинче, юханшыв транспортӗнче хӗрарӑмсене хӗрсем паттӑрлӑхпа хастарлӑх кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара хӗҫпӑшалпа боеприпассем ытларах та ытларах парса тӑраҫҫӗ.

Хӗрарӑм-колхозницӑсем ялхуҫалӑхӗнче тӗп вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар вӑрҫӑ ынӗ мӗнпур тапхӑрта апат-ҫимӗҫ ҫитмеҫлӗхне курмасть, ҫакӑнта ентӗ пирӗн ҫӗршыври колхозницӑсен тава тивӗҫлӗ ҫав тери пысӑк ӗҫӗ палӑрса тӑрать. Миллионшар хӗрарӑм-колхозницӑсем хӑйсен геройла ӗҫӗпе фронтпа тыла апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа вара—чӗртавар парса тӑрас ӗҫре пулӑшаҫҫӗ.

Тӑшмантан ирӗке кӑларнӑ районсенчи хӗрарӑмсем хӑйсене ирӗке кӑларнӑ Хӗрлӗ Ҫара кунран-кун вӑйлӑнрах пулӑшса тӑраҫҫӗ, нимӗҫ захватчикӗсем ишӗлтерсе хӑварнӑ хуласемпе ялсене, хуҫалӑхпа культура учрежденийӗсене юсаса ура ҫине тӑратассишӗн вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Совет хӗрарӑмӗсем — ача амӑшӗсем паттӑр воинсене пӑхса ҫитӗнтерчӗҫ. Ҫав воинсем Сталинградран куҫласа Берлин ҫывӑхне ҫитиччен историлле кӗрешӳ ҫулне утса тухрӗҫ. Хӑйсем ывӑлӗсенчен паттӑр та хастар воинсем пӑхса ҫитӗнтернӗ хӗрарӑмсене Совет государстви пысӑка хурса мухтавлать. «Ача амӑшӗ—героиня» ятне тунӑ, «Ача амӑшӗн мухтавӗ» ятлӑ орденпа «Ача амӑшӗн медалӗ» ятлӑ медале туни ССР Союзӗнче ача амӑшӗн хисеплӗ вырӑнне тытах та ҫӳлерех ҫӗклерӗ. Хӗрарӑмсем-ача амӑшӗсем ҫамрӑк ӑрӑва Тӑван ҫӗршыва чӗререн парӑнса тӑма, пӗлӳлӗхпе ӗҫе юратма вӗрентсе ҫитӗнтереҫҫӗ.

Темиҫе вуншар пин хӗрарӑм вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсене ҫухатнӑ ачасене пӑхса ӳстерме йышӑнчӗҫ, ҫав ачасене тӑван амӑшӗсем пек ачашласа ӳстерме тытӑнчӗҫ. Совет хӗрарӑмӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн аманнӑ тата сывалакан воинӗсене пӑхас ӗҫре ҫав тери пысӑк пулӑшу парать. Пиншер хӗрарӑмсем, донорсем пулса тӑрса, хӑйсен юнӗсене фронтовиксен пурнӑҫне ҫӑлса хӑварнӑ ҫӗре параҫҫӗ.

Совет хӗрарӑмӗсем Тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ, Совет государствин ҫарпа экономика тӗлӗшӗнчи хӑватне ӳстерме пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем Тӑван ҫӗршыва фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен хӳтӗлесе хӑварнӑ хӑйсен ашшӗсемпе ывӑлӗсен, упӑшкисемпе тӑванӗсен чапне тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче нумай совет хӗрарӑмӗсем, алла хӗҫпӑшал тытса, тӑшманпа паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Связистсемпе снайперсем, зенитчиксемпе летчиксем хушшинче те хӗрарӑмсем—вӑрҫӑ ӗҫӗн мастерӗсем сахал мар. Санитаркӑсемпе медицина сестрисем, врачсем, аманнӑ боецсемпе офицерсен пурнӑҫӗсене ҫӑлса хӑвараҫҫӗ. Пиншер хӗрарӑм-фронтовиксене орденсемпе тата медальсемпе наградӑланӑ, вӗсенчен чи лайӑххисем Совет Союз Геройӗн чаплӑ ятне илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Совет хӗрарӑмӗн ӗҫри тата вӑрҫӑри паттӑрлӑхӗ, унӑн ҫирӗплӗхӗпе хастарлӑхӗ, вӗсем вӑрҫӑн мӗнпур йывӑрлӑхӗсене паттӑррӑн ҫӗнтерме пултарни,—ҫаксем пурте хӗрӳллӗ совет патриотизмӗнчен, Совет Ҫӗршывне пӗтӗм чун-чӗререн парӑнса тӑнинчен ҫӑлкуҫланса тухаҫҫӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑра совет хӗрарӑмӗсем хӑйсене ирӗклӗх панӑ тӑван совет влаҫне, хӑйсен политикӑллӑ прависене, хӑйсене пултарулӑн ӗҫлеме тата телейлӗ ача амӑшӗсем пулма май панӑ ирӗклӗхе хӳтӗлеҫҫӗ.

Нимӗҫ тискер кайӑкӗсем совет хӗрарӑмӗсенчен ирӗклӗ пурнӑҫа туртса илме, вӗсене мӗскӗн чурасем туса хума хапӑлнӑ. Хӗрлӗ Ҫар Совет Союзӗнчи халӑхсене фашистла нимӗҫ чуралӑхӗнчен ҫӑлса хӑварчӗ. Мухтавлӑ совет патриоткисем, хӑйсен упӑшкисемпе, ывӑлӗсемпе тата тӑванӗсемпе алла-аллӑн тӑрса, хамӑрӑн социализмлӑ Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхне никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлесе хӑварчӗҫ.

Гитлерла юнлӑ режимӑн шутлӑ кунсем юлчӗҫ. Анчах татӑклӑ ҫӗнтерӳ тӑвас ҫул ҫинче Хӗрлӗ Ҫарӑн тата пирӗн союзниксен ҫарӗсен вилӗм шӑпи умӗнче тӑракан тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пыма тивет-ха. Совет хӗрарӑмӗсем, пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, ҫӗнӗрен татах та ытларах вӑй хурса кӗрешни кирлӗ.

ВКП(б) Центральный Комитечӗ мӗнпур парти организацийӗсене Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунне—Мартӑн 8-мӗшне, гитлерла Германие хӑвӑртрах та пуҫӗпех ҫапса аркатас тӗллевпе, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине малалла ӳстермелли, Совет государствин вӑрҫӑпа экономика тӗлӗшӗнчи хӑватне ҫирӗплетмелли массӑллӑ-политикӑллӑ кампани вырӑнне хурса ирттерме хушать. Парти организацийӗсен мӗнпур ӗҫ хӗрарӑмӗсене ҫакӑн ҫинчен ӑнлантарса парас пулать: тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатас тесе, пирӗн ҫӗршыври кашни хӗрарӑмпа хӗрӗн, мӗнпур совет халӑхӗнни пекех, татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлемелле, фронт валли хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем тата снаряжени туса кӑларассине, ҫарпа ҫӗршыв валли—апат-ҫимӗҫ, промышленность валли—чӗртавар парса тӑрассине кунран-кун ӳстерсе пымалла.

Парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийӗсен ӗҫхӗрарӑмӗсене производство ӗҫне вӗрентессишӗн, вӗсене политикӑллӑ воспитани парассишӗн куллен тӑрӑшмалла, малта пыракан хӗрарӑмсене совета хуҫалӑх тата общество организацийӗсенчи ертсе пырас ӗҫсене куҫарса пымалла. Халӑх хуҫалӑхӗнче ӗҫлекен хӗрарӑмсен пурнӑҫпа йӑлари нушисене тивӗҫтерессишӗн пур енӗпе те тӑрӑшни, ача амӑшӗсене куллен пулӑшса пыни кирлӗ.

Хӗрарӑм-работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Хӗрлӗ Ҫар валли танксемпе самолетсем, орудисемпе минометсем, пулеметсемпе автоматсем ытларах та ытларах туса парӑр!

Хӗрарӑм-колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсенчи работницӑсем, ялхуҫалӑхӗнчи специалистсем! Пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлесе, 1945 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планне — вӑрҫӑпа хуҫалӑх тӗлӗшӗнчи ҫак чи паха задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме пулӑшӑр! Фронтпа ҫӗршыва апат-ҫимӗҫпе чӗртавар ытларах парса тӑрӑр!

Хӗрарӑм—железнодорожницӑсем! Транспортра вӑя хӗрхенмесӗр тата тикӗс ӗҫлесе, тӑшмана ҫапса вӗлерме Хӗрлӗ Ҫара пулӑшӑр!

Хӗрарӑмсем—наукӑпа культура работникӗсем, инженерсем, агрономсемпе врачсем, совет учрежденийӗсенчи работницӑсем! Совет наукипе техникине тата культурине малалла аталантарса пырӑр!

Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫре ӗҫлекен хӗрарӑмсем! Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе мӗнпур вӑйӑрсене, пӗлӗвӗрсемпе опытӑрсене парӑр!

Хӗрарӑмсем-зенитчицӑсемпе снайперсем, летчицӑсемпе связисткӑсем! Хӑвӑрӑн ҫапӑҫури ӑсталӑхӑра ҫине тӑрса ӳстерсе пырӑр, нимӗҫ ирсӗрӗсене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтерсе пырӑр!

Хӗрарӑмсем—врачсем, фельдшерсем, медицина сестрисем, санитаркӑсем! Аманнӑ совет воинӗсен пурнӑҫӗсене сыхласа хӑварассишӗн тата вӗсене строя таврӑрассишӗн вӑя хӗрхенмесӗр кӗрешӗр!

Совет хӗрарӑмӗсемпе хӗрӗсем! Производствӑри специальноҫсене лайӑх вӗренсе алла илӗр, ӗҫ тухӑҫлӑхне ывӑнма пӗлмесӗр ӳстерсе пырӑр! Ҫар ӗҫне вӗренӗр! Тӑшмана ҫапса аркатас ӗҫе, халӑх хуҫалӑхне малалла ӳстерес ӗҫе мӗнпур вӑя парар!

Ирӗклӗхе юратакан халӑхсен, нимӗҫ империализмне хирӗҫ кӗрешекен халӑхсен хӗрарӑмӗсене салам! Гитлерла Германие пуҫӗпех ҫапса аркатас ӗҫе пӗрлешнӗ нацисен мӗнпур вӑйӗсемпе ҫапӑҫури хӑватне парар! Пӗтӗм тӗнчери халӑхсем хушшинче ҫирӗп мир туса хурар!

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ мӗнпур ӗҫхӗрарӑмӗсене Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунӗ—Мартӑн 8-мӗшӗ ячӗпе саламлать тата ҫакна ҫирӗп шанса тӑнине палӑртать: совет хӗрарӑмӗсем, тылпа фронтра паттӑрла ҫӗнӗ ӗҫсем туса, тӑшмана эпир пӗтемпех ҫӗнтерес сехете ҫывхартӗҫ!

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн
Центральный Комитечӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 5-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 5-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре малалла тапӑнса пынӑ, КОРШЕЛЬКЕН, КУМГАРБЕН, БЕНКЕНВАЛЬДЕ, ШТРАУБЕН, ХИРШФЕЛЬД ялӗсене туртса илнӗ.

ДАНЦИГ хулинчен кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, ВИЗЕНВАЛЬД, ЛЮБИХОВ, ШТУДЗЕНИЦ, ГУРКИ, ЛЕСНО, КРУШИН, ЛИПНИЦ, ВОРЦИСКОВО ялӗсене туртса илнӗ.

Померанире, КЕЗЛИН хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра, пирӗн ҫарсем малалла наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ВИЗЕНТАЛЬ, ДАМЕРОВ, ЦУХЕН, ЛАТЦИГ, НЕДЛИН, ГРОСС ТИХОВ, ГРОСС-КРЕССИН ятлӑ пысӑк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, мартӑн 5-мӗшӗнче ШТАРГАРД, НАУГАРД, ПОЛЬЦИН хулисене—ҫулӗрсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен ШТЕТТИН хули еннелли оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—КЛОТЦЕН, КОЛЛАТЦ, НОЙ ВУРОВ, ТЕШЕНДОРФ, БРИЗЕН, ЗИММАТЦИГ ятлӑ пысӑк ялсем.

Чехословакире, ЛУЧЕНЕЦ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнче наступлени туса пырса, ПЛЕШОВЦЕ, БЗОВСКА, ЛЕГОТКА, КРУПИНА, АНТОЛ, ИЛИЯ, ВИСОКА, ГРОН ишмӗ ҫинче РУДНО ялӗсене ҫапӑҫса туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата тылӑй пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 4-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 70 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 15 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Хӗвелтухӑҫ Пруссире, Кенигсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пӗр соединени чӑсӗсем тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та ҫӗрле ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункт пулса тӑракан Коршельхен ялне туртса илнӗ. Нимӗҫсем, ҫав яла каялла туртса илме хӑтланса, 11 контратака тунӑ, анчах та вӗсене кашнинчех каялла хӑвала-хӑвала янӑ. Пирӗн ытти чӑсӗсем мина хирӗсем урлӑ каҫса кайнӑ та гитлеровецсене Браунсберг хулинчен 11 километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Штраубен ялӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ. Тӑшмантан 8 тупӑ, 40 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. 250 нимӗҫе ытла тыткӑна илнӗ.

Пирӗн авиаци тӑшманӑн Хӗвелтухӑҫ Пруссири группировкин ҫарӗсемпе тылӗсене бомбӑсем пӑрахса штурмлачӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче совет летчикӗсем нимӗҫсен пилӗк самолетне персе ӳкернӗ.

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Совет пехотинецӗсем тата танкистсемпе кавалеристсем, артиллерипе авиаци пулӑшнипе, тӑшмана ҫав тери хаяррӑн пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Нимӗҫсен соединенийӗсене нумайӗшне пӗр-пӗринчен уйӑрса янӑ та пайӑн-пайӑн пӗтереҫҫӗ. Совет кавалеристӑсем шоссе ҫулӗсемпе чугун ҫулсен паха узелӗ пулса тӑракан Польцин хулине атакӑласа туртса илнӗ. Пирӗн ытти чӑсӗсем нимӗҫсене вӗсен оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Наугард хулинчен хӑваласа кӑларнӑ. Штаргард хулишӗн хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Нимӗҫсем ку хулана пиҭӗ пысӑка хунӑ, мӗншӗн тесен вӑл ҫулӗрсен паха узелӗ тата Штеттин хулине кайакан ҫулсем ҫинче вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункт пулса тӑрать. Тӑшман Штаргард районне хыпаланса ҫӗнӗ чӑсем куҫарса пынӑ та темиҫе хутчен те хаяр контратакӑсем тунӑ. Тӑшман контратакисене сирсе ярса, совет ҫарӗсем Мадю-Зее кӳлли хӗррине ҫитсе кайнӑ. Штаргард хулинчи нимӗҫсен гарнизонне хупӑрласа илме пуҫланӑ. Пирӗн танкистсемпе пехотинецсем хулана штурмлама пуҫланӑ та урамсенче пулса иртнӗ хаяр тытӑҫусем хыҫҫӑн пилӗк чугун ҫулӗн тата йышлӑ шоссе ҫулӗсен узелӗ пулса тӑракан Штаргард хулине тытса илнӗ. Нимӗҫсен, пӗр вилнисене кӑна шута илсен те, 4.000 салтакпа офицер ытла пӗтнӗ. 35 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ, 17 бронетранспортер тата тӑшманӑн ытти техникине те пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн чӑсем трофейсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра боеприпассен тата ҫар пурлӑхӗн пысӑк склачӗсем.

Сан-Франциско хулинче пулмалли конференци ҫинчен

1945 ҫулхи апрелӗн 25-мӗшӗнче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи Сан-Франциско хулинче Пӗрлешнӗ Нацисен конференцине пухасси ҫинчен Крымри конференцире йышӑннӑ тӑрӑх, Китай Правительствипе тата Францин Вӑхӑтлӑх Правительствипе канашлу туса ирттернӗ, вӗсене Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Великобританин тата Совет Союзӗн Правительствисемпе пӗрле ытти ҫӗршывсене ҫав конференцие чӗнес ӗҫе хутшӑнма сӗннӗ. Канашласа пӑхнӑ хыҫҫӑн Китай Правительстви чӗнӳсем салатас ӗҫе хутшӑнма килӗшнӗ. Францин Вӑхӑтлӑх Правительстви илсен, вӑл Сан-Франциско хулинчи конференцие хутшӑнма килӗшнӗ, анчах та ытти ҫӗршывсене ҫав конференцие чӗнес ӗҫе хутшӑнма килӗшмен, мӗншӗн тесен вӑл Думбартон-Оксри калаҫусене хутшӑнман.

Ҫавӑрахра эпир Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви хӑйӗн ячӗпе, ҫавӑн пекех Совет Союзӗн, Великобританин тата Китай Правительствисен ячӗпе ытти ҫӗршывсен правительствисене Сан-Франциско хулинчи конференцие чӗнсе 1945 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗнче салатнӑ ҫырӑва пичетлетпӗр:

„Чӗнӳ"

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви хӑйӗн ячӗпе тата Великобританипе Ҫурҫӗр Ирландин Пӗрлешӳллӗ Королевствин, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн тата Китай республикин Правительствисен ячӗпе.... Правительствине Пӗрлешнӗ Нацисен конференцине, пӗтӗм тӗнчере мирпе хӑрушсӑрлӑха сыхласа тӑмалли Пӗтӗм Тӗнчери Организаци Уставне хатӗрлемешкӗн 1945 ҫулхи апрелӗн 25-мӗшӗнче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи Сан-Франциско хулинче пухӑнмалласкерне, представительсем яма чӗнет.

Ҫӳлте асӑннӑ Правительствӑсем ҫапла сӗнеҫҫӗ: ҫав Уставӑн никӗсӗ вырӑнне хурса, Пӗтӗм Тӗнчери Организацие тӑвас тӗлӗшпе Думбартон-Оксра пулса иртнӗ Конференцин иртнӗ ҫулхи октябрь уйӑхӗнче пичетлесе кӑларнӑ сӗнӗвӗсене ӳсте-ямалла. Вӗсем ҫумне С разделӑн VI-мӗш сыпӑкӗ пирки ҫапла хушса хунине асра тытмалла.

«С. САСӐЛАС ЯЕРКЕ

1. Хӑрушсӑрлӑх Совечӗн кашни членӗн пӗр сасӑ пулмалла.
2. Хӑрушсӑрлӑх Совечӗн процедура ыйтӑвӗсем тӑрӑх йышӑнакан решенийӗсене 7 сасӑпа йышӑнмалла.
3. Хӑрушсӑрлӑх Совечӗн решенийӗсене ытти пур ыйтусем тӑрӑх та 7 сасӑпа йышӑнмалла. Тавлашӑва хутшӑннӑ енӗ, А разделӑн 8-мӗш сыпӑкӗ тӑрӑх тата С разделӑн 7-мӗш сыпӑкӗнчи 1-мӗш абзацри 2-мӗш фрази тӑрӑх, сасӑлама пултараймасть.

Тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнни ҫинчен малашне пӗлтерӗпӗр.

... . Правительстви конференцичен маларах хӑйӗн шухӑшӗсене палӑртса парас тет пулсан, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви ҫавӑн пек шухӑшсене сӗнӳсене ытти правительствӑсене пӗлтерме пулать».

Ҫӳлте асӑннӑ чӗнӗве ҫак ҫӗршывсене янӑ:

Австралие	Индие
Бельгие	Ирана
Боливие	Ирака
Бразилие	Либерие
Канадӑна	Люксембурга
Чилие	Мексикӑна
Колумбие	Голландие
Коста Рикӑна	Ҫӗнӗ Зеландие
Кубӑна	Никарагуана
Чехословакие	Норвегие
Доминикан республикине	Панамӑна
Эквадора	Парагвая
Египета	Перуна
Эль Сальвадора	Филиппина
Эфиопие	Сауд Аравине
Франциe	Турцие
Грецие	Кӑнтӑр Африка Союзне
Гватемалӑна	Уругвая
Гаитие	Венецуэлӑна
Гондураса	Югославие

Парти пурнăçĕ

ÇĔКĔ ПАРТОРГАНИЗАЦИН ПАХА ĔÇĔСЕМ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Ултă уйăх каярах, августăн 20-мĕшĕнче «Трактор» колхозри пуçламĕш парторганизаци пĕррремĕш пухă пулса иртнĕ. Вăл пуху—организациллĕ пуху пулнă. Унтанпа коммунистсем, кашни эрнере е икĕ эрнерех пухăнса, колхоз производствин ĕçĕсене малалла аталантарса пырасси çинчен сÿтсе яваççĕ.

Коммунистсем пурте тенĕ пекех ертсе пыракан ĕçсенче. Партин пуçламĕш организацин секретарĕ Т. Иванова юлташ—колхоз правленийĕн председателĕ. Вăл парти ретне те вăрçă кунĕсенче кĕнĕ. Çамрăк коммунистка Е. Павлова юлташ—уйхи бригадирĕ. Унăн бригади 1944 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 17 центнер тыран тĕштырă туса илнĕ, кăçалхи çуракине ирттерме те тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. ВКП(б) кандидачĕ А. Николаева юлташ фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлет. Фермăра халĕ 78 ĕне, сурăхсем 114 пуç, сыснасем 97 пуç пур. Кусемсĕр пуçне 1945 çула кĕнĕренпе колхоз фермисенчи выльăхсенчен 5 пăру, 62 путек тата 14 сысна çури илнĕ. «Трактор» колхозра çамрăк выльăхсем вилни пачах пулман.

Çавăн пекех ытти коммунистсем те лайăх ĕçлеççĕ. М. Алексеев юлташ — колхоз хуçалăхĕн заведующийĕ, А. Никитина юлташ—фермăра ĕне сăвакан, К. Мищенко тимĕрçĕ пулса ĕçлеççĕ.

Партин «Трактор» колхозри организацийĕ комсомол организацине кулленех вĕрентсе пулăшса пырать. Çавна пула комсомолăн йышĕ те ÿсет. 1943 çулти июль уйăхĕнче комсомолăн пуçламĕш организацийĕнче 3 çын пулнă, халĕ комсомол организацинче 32 çын шутланать. Çапла вара комсомолăн йышĕ кĕске вăхăт хушшинче 10 хут ытла ÿснĕ. Комсомолецсенчен виççĕшĕ (Е. Павлова, А. Никитина, А. Николаева юлташсем) парти ретне куçнă. Комсомолецсенчен 4 çын звеновод пулса, 2 çын бригадир пулса, 8 çын фермăсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци çумĕнче виççĕ уйăх ытла ĕнтĕ политика шкулĕ ĕçлет. Шкула пур коммунистсем те тата комсомолецсем 4 çын пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Политшкула ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Е. Махмутова юлташ ертсе пырать.

Коммунистсемпе комсомолецсен пĕлĕвĕ ÿссе пыни колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн туса пыма май парать. Агитколлективра 16 агитатор шутланать, вĕсенчен чылайĕшĕ—коммунистсемпе комсомолецсем. Партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем «Вăйлă тырпулшăн» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Нумаях пулмасть туса лартнă колхоз клубне кашни каçхине тенĕ пекех колхозниксем юлашки хыпарсене пĕлме пухăнаççĕ, кунта хорпа драма кружокĕсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ.

Партин пуçламĕш организацийĕ социализмлă ăмăртăва организацилесе ертсе пырать, колхозниксемпе колхозницăсене ăмăртура малти вырăна тухма мобилизацилет. Халĕ колхоза куçса çÿрекен икĕ Хĕрлĕ Ялав панă. Пĕрне 1944 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Чăваш АССР Совнаркомĕ панă, тепĕрне райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ 1944 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене кĕске вăхăтра, лайăх пахалăхпа вĕçленĕшĕн панă. Çав ялавсене хăйĕн аллинчех тытса тăрассишĕн кĕрешеççĕ халĕ колхозниксемпе колхозницăсем.

Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем хăйсене хушнă ĕçсене вăхăтра та тĕплĕн пурнăçласа пынине пула, колхоз 1945 çулхи çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăх фондне хывса çитернĕ тата вăрлăхсем мĕнле шăтнине тĕрĕсленĕ. Ялхуçалăх машинисене юсаса лартнă. Хĕле кĕнĕренпе хире 3000 лав ытла тислĕк кăларнă. Лаша витинчи, фермăсенчи тата колхозниксен килĕсенчи тислĕк пĕтĕмĕшпех хире тухса тăрать. Партин пуçламĕш организацийĕ кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет.

В. АНДРЕЕВ.

Комсомол организацийĕн ĕçĕ лайăхланчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Отчетпа суйлав пухăвĕ хыççăн Ямайкасси ял Советне кĕрекен «Большевик» колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ хăйĕн ĕçне нумай лайăхлатрĕ. Организаци пур ĕçсене те плана тăрăх туса пырать, пухусем вăхăтра пулса иртеççĕ. Комсомолецсем колхоз ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. В. Семенова комсомолка ферма заведующийĕ, К. Захаровăпа В. Иванова комсомолкăсем свинаркăсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ. Паянхи куна К. Захаровăпа В. Иванова çĕршер ытла ĕçкунĕ тунă.

Комсомолецсем бригадăсемпе звеносенче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ. М. Иванов, М. Анисимов тата П. Иванов комсомолецсем боевой листоксемпе стена хаçатне йĕркеллĕ кăларса тăраççĕ. Çакă вăл колхозри нумай çитменлĕхсене пĕтерсе, ĕçе лайăхлатма пулăшать.

Комсомолецсем пур ĕçре те примерлă пулни, хастарлăн ĕçлени вĕсен авторитетне хăпартрĕ. Çавна пула колхозри чылай çамрăксем комсомола кĕме тăрăшаççĕ.

Г. ЗАХАРОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Икĕ колхозăн ăмăртăвĕ

Çĕрпӳ районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан тата «Пионер» колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерессишĕн ăмăртса ĕçлерĕç. Çак кунсенче колхозсен 1944 çулхи ăмăрту договорне епле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тухрĕç.

Сĕлескерти Буденный ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулхи çуракине договорта кăтартнă 10 кун вырăнне 7 кун хушшинче туса ирттернĕ. Колхоз çуркуннехи агротехника мероприятисене пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. Хире 1.830 лав вырăнне 3.240 лав тислĕк кăларнă.

Кăшаркассинчи «Пионер» колхоз çуракине 6 кун хушшинче туса ирттернĕ, планран ирттерсе 10 гектар пăрçа акса хăварнă.

Икĕ колхоз та тырпулсене вăхăтра та пĕр тăкаксăр пухса кĕртнĕ, государствo умĕнчи обязательствăсене ытлашшипех парса татнă.

Çуркуннехи агротехникăллă мероприятисене тĕплĕн пурнăçланине пула, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 1944 çулта гектартан вăтам шутпа 14-шар центнер, «Пионер» колхоз 13,5-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 3,2-шер килограмм тĕштырă, 2-шер килограмм çĕрулми, пĕр килограмм та 500 грамм купăста тата пĕр тенкĕ те 80-шер пус укçа валеçсе панă. «Пионер» колхоз колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне тĕштырă 2 килограмм, çĕрулми—2 килограмм тата купăста пĕр килограмм та 80 грамм валеçнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çакăн пек ĕçленĕ. Пур выльăхсем енĕпе те государство планне тултарнă. Сĕлескерти Буденный ячĕпе тăракан колхоз государствăна аш-какай памалли плана иртнĕ çулшăн кăна мар тултарнă, 1945 çулхи обязательство шучĕпе те 70 килограмм парса хунă. План тăрăх кашни ĕнерен иртнĕ çул 1.200 литр сĕт суса илмелле пулнă. Ферма работникĕсем хастарлă ĕçленипе 1.280-шар литр сĕт суса илнĕ. Колхоз кашни ама сыснаран 14-шар сысна çури илсе ÿстернĕ. «Пионер» колхоз та сĕт суса илес плана ирттерсе тултарнă. Анчах Буденный ячĕпе тăракан колхозри кашни ĕне çулталăк хушшинче вĕсен ĕнисенчен 240 литр сĕт ытларах панă.

Çапла 1944 çулхи социализмлă ăмăрту итогĕсем колхозниксене 1945 ялхуçалăх çулĕнче тата пысăкрах ÿсĕмсем тума хавхалантараççĕ.

Хальхи вăхăтра çак ăмăртакан колхозсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. «Пионер» колхоз паянхи куна çитсе хире 2700 лав тислĕк кăларнă. 300 лав фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл нумай пухса хунă. Буденный ячĕпе тăракан колхоз та хире 3050 лав тислĕк кăларнă.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн ăмăртакан колхозсем халĕ пикенсе ĕçлеççĕ.

А. ИВАНОВ.

Вăкăрсене кÿлме вĕрентмелле

КУКЕÇ. Ялхуçалăх ĕçĕнче майракаллă шултăра выльăхсем пысăк вырăн йышăнса тăнине республикăри малта пыракан колхозсем аван кăтартса пачĕç. Вăкăрсемпе ĕнесем, вĕсемпе йĕркеллĕ ĕçлеме пĕлсен, колхозсене пысăк усă параççĕ.

Районри «Заря», «Победа», «Крахмал» колхозсем иртнĕ çулта вăкăрсемпе лайăх усă курчĕç. Çав колхозсем вăкăрсене кÿлсе ĕçлеме кăçал та тăрăшса вĕрентеççĕ. Анчах та районри чылай колхозсем вăкăрсене кÿлме вĕрентес ĕç çине сиелтен пăхаççĕ-ха. Çавна пула паянхи куна районри колхозсем 300 вăкăртан 60 вăкăра çеç кÿлме вĕрентнĕ.

Кивçурткассинчи «XI лет Октября» колхозăн кÿлме юрăхлă лашасем пĕтĕмпе 33. Кăçалхи çуракинче кашни лашапа 10 гектар ытла сухалама тивет. Çапах та колхоз 4 вăкăртан пĕр вăкăра çеç кÿлме вĕрентнĕ.

Çавăн пекех Крупская ячĕпе тăракан колхоз 6 вăкăртан 2 вăкăра, Чăкăр ялсоветĕнчи «Трудовик» колхоз 4 вăкăртан пĕр вăкăра çеç кÿлме вĕрентнĕ.

Районри колхозсен çуракине тухиччен кÿлме юрăхлă вăкăрсене пурне те ĕçлеме вĕрентмелле.

Г. ПЕТРОВ.

„Радио" колхоз çуракине хатĕр

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, мартăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). «Радио» колхоз членĕсем çитес çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн вăя хурса ĕçлеççĕ. Колхоз акмалли вăрлăхсене кирлĕ таран хатĕрленĕ, вĕсене кондицие лартнă. Вăрлăхсен шăтасlăхĕ 98,9 процент шутланать. 10 плуг, 10 тимĕр сÿре юсанă, çĕнĕрен 30 сÿре тунă. Колхоз председателĕ Индейкин юлташ конюхсем лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслесех тăрать. Çавăнпа кунта лашасем те вăтам ÿт-пÿллĕ, ĕçе юрăхлă.

А. ШИНЖАЕВ.

1945 çулшăн аш-какай парса татнă

КАНАШ. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Кивĕ Ахпÿртри «Красный путиловец» колхоз членĕ, икĕ фронтовикăн ашшĕ Г. Николаев юлташ 1945 çулшăн государство обязательстви тăрăх аш-какай парса татрĕ, килес çулшăн та аванс шучĕпе пачĕ. Николаев юлташ çавăн пекех укçа-тенкĕ парăмĕсене те яланах вăхăтра тÿлесе пырать.

И. МАКСИМОВ.

Кроса мĕншĕн колхоз çамрăкĕсене хутшăнтарман

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Февралĕн 18—25-мĕшĕсенче пирĕн районра та профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕр кросĕ пулса иртрĕ. Унта пурĕ 3.035 çын хутшăннă. Вĕсенчен 1.694-шĕ ГТО, 1341-шĕ БГТО нормисене панă. Йĕлтĕрлĕ кроса Хĕрлĕ Чутай, Атнар, Уйпуç, Пантьăк, Хуракас кусĕсенче ирттернĕ. Анчах та пĕрмине те кроса колхоз çамрăкĕсене хутшăнтарман, шкул ачисемпе комсомолецсене çеç хутшăнтарнă. ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ, вăлах оргкомитет председателĕ Корнилов, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Мурзина юлташсем йĕлтĕрлĕ кросăн пĕлтерĕшне çакăн пек çеç ăнланнă-ши вара?

П. Т.

Варшава хулине юсама пулăшни

ПОЛЬША СТОЛИЦИНЕ Н. С. ХРУЩЕВ ЕРТСЕ ПЫРАКАН ЭКСПЕРТСЕН КОМИССИЙĔ ПЫРСА ÇИТНĔ

Варшава хулине ССР Союзĕн Варшава хулине юсама пулăшмашкăн янă экспертсен комиссийĕ пырса çитнĕ. Комиссие Украина Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Н. С. Хрущев ертсе пырать.

Хрущев юлташ ертсе пыракан комисси ĕнерех премьер-министрпа Осубка-Моравскипе, Варшава президенчĕпе Спыхальский генералпа, СССР-ăн Польшăри посолĕпе Лебедев юлташпа тата СССР-ăн Польшăри çар миссийĕн начальникĕпе Шатилов генерал-лейтенантпа пĕрле Варшава хулине пăхса çÿренĕ. Çакăн хыççăн комисси Варшава Халăх Совечĕн çуртĕнче Польша столицин руководителĕсемпе, инженерсемпе тата архитекторсемпе канашлу туса ирттернĕ.

Каçхине Польша Халăх Совечĕн президенчĕ Берут тата премьер-министр Осубка-Моравский Н. С. Хрущевпа экспертсен комиссийĕ ячĕпе апатлану туса ирттернĕ. Апатлану Польшăпа совет халăхĕн туслăхне кăтартса, питĕ кăмăллă иртнĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: нимĕçсем Рейн облаçĕнчи Ксантенра вăйлă хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Ксантен вăл Везельри Рейн шывĕ урлă хывнă кĕпере хÿтĕлесе тăракан вичĕтеслĕхре ларать, унти тĕрек пегнĕ пунктсенчен пĕри пулса тăрать. Ытти вырăнсенче союзниксем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Веезе—Гельдерн—Венло районĕнче хупăрласа илнĕ тăшмана пĕтерсе пынă. Унтан хĕвелтухăçнерехре Капеллен, Иссум тата Рейрдт хулисене тăшмантан тасатнă. Кунтан хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Мерсра, Гомбергра тата Юрдингенра çапăçаççĕ. Кельнран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Штоммельнпа Зиннерсдорфа тăшмантан тасатнă.

Саарбрюккенпа Мец хушшинчи çула Саарбрюккенран 2 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре татнă.

Мартăн 3-мĕшĕнче союзниксем хĕвеланăçĕнче 9.769 çын тыткăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировка авиацийĕн пит пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Вĕсем пырса тапăннă тĕп объектсем Дортмунд—Эмс каналĕ тата Дортмунд сывăхĕнчи Каменри синтетически нефть завочĕ пулнă. Атака питĕ вăйлă пулнă. Кунсăр пуçне, Берлина тата çулйĕрсен паха узелĕ пулса тăракан Вюрцбурга тапăннă. Бомбардировщиксене çĕрлехи истребительсем пулăшса пынă.

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Авиацин 8-мĕш корпусĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 5-мĕшĕнче американецсен «Либерейтор» тата «Вĕçекен крепость» йышши 400 бомбардировщикĕ ытла, 600 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе, Гамбург сывăхĕнчи Гарбургри нефть тасатакан заводсене тата Хемницри чугун çул деповне тапăннă.

ГЕРМАНИРЕ УКÇА ЙӲНЕЛНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Гамбургер Фремденблат» гитлерла хаçат Германире укçа хакĕ çав тери йÿнелни çинчен пĕлтерет. Вăрçă умĕн Германире 8 миллиард та 710 миллион марка хут укçа çÿренĕ. 1944 çулхи ноябрь уйăхĕ тĕлне 44 миллиард та 700 миллион марка çÿренĕ. Вăрçăн пĕррремĕш çулĕнче, 1940 çулхи октябрь уйăхĕ пĕтнĕ тĕле, халăх хушшинче çÿрекен хут укçа 4 миллиард маркăлăх ÿснĕ. 1943 çулхи октябрь уйăхĕ тĕлне вăл 22 миллиард маркăлăх, 1944 çулхи октябрь уйăхĕ тĕлне 36 миллиард маркăлăх ÿснĕ.

ЮГОСЛАВИ ХАЛАХĔН ИРЕКЛĔХ ÇАРĔПЕ ФЛОТНЕ УРАХЛА ЯТ ПАРАССИ ÇИНЧЕН ТИТО МАРШАЛ КĂЛАРНĂ ПРИКАЗ

БЕЛГРАД, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави наци оборони ĕçĕсен доверенăйĕ, верховнăй главнокомандующи Югослави маршалĕ Иосиф Броз-Тито халăхăн ирĕклĕх çарне урăхла ят парасси çинчен тата çав çарăн верховнăй штабне улăштарасси çинчен приказ кăларнă.

«Пирĕн халăхсен ирĕклĕхĕшĕн пыракан çапăçура çуралнă ирĕклĕх çарĕ,—тенĕ приказра,—хамăр çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешсе, демократиллĕ тата федерациллĕ Югославин чăн-чăн хĕçпăшаллă вăйĕ пулса тăчĕ. Пирĕн çар, хамăр халăхсен тăванлăхĕпе пĕрлĕхĕ çинче пикĕсленсе тăрса, çав тăванлăха малашне те çирĕплетсе пыма пулăшса тăрать. Ÿссе çитнипе пула тата çар искусствипе хĕçпăшалланнине пула, пирĕн çар кучухнехи яланхи çарăн ĕçне туса тăрать. Çаксене шута илсе, çапла приказ паратăп:

1. Халăхăн ирĕклĕх çарне паянтан пуçласа Югослави çарĕ тесе ят парас.

2. Халăхăн ирĕклĕх çарĕн тинĕс-çар флотне Югославин тинĕс-çар флочĕ тесе ят парас.

3. Халăхăн ирĕклĕх çарĕн тата Югославири партизансен отрячĕсен верховнăй штабне генеральнăй штаб туса хурас. Çав штаб наци оборона ĕçĕсен доверенăй органĕ пулса тăмалла».

ЮГОСЛАВИ РЕГЕНТ СОВЕЧĔН ПЕТР КОРОЛЬ ЙЫШĂННĂ СОСТАВĔ

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Петр король пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Шубашич премьер-министр тăратнă ултă кандидатран король регент советне виçĕ кандидата суйласа илнĕ, тенĕ. Вăл кандидатсем çаксем: Будасавлевич (серб), Анте Мандич (хорват) тата Душан Сернец (словенец).

ПЕТЭНАН, ЛАВАЛĔН ТАТА ФРАНЦИН ЫТТИ СУТĂНЧĂКĔСЕН ПУРЛĂХНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

ПАРИЖ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, Сена департаменчĕн трибуналĕ Петэн маршалăн, Пьер Лавалĕн, çавăн пекех тата Виши «правительствин» статс секретарĕсем, министрĕсем пулса ĕçленĕ çынсен тата Вишири ытти аслă чиновниксен пурлăхне тытса илесси çинчен решени йышăннă.

ГОЛЛАНДИ АГЕНТСТВИ СУТĂНЧĂКСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Голландири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: хальхи вăхăтра Голландин ирĕке кăларнă пайĕнче 12.000 голландеца хупнă. Вĕсене оккупантсемпе пĕрле ĕçленĕшĕн тата Голландири нацистла партире тăнăшăн айăплаççĕ. 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ хыççăн вĕсене 29 лагерьте усраççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: мартăн 2-мĕшĕнче Америка çарĕсем Лубанг утравне туртса илнĕ. Ку утрав Манила заливне кĕмелли вырăнтан 35 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре выртать. Япони çарĕсем начар хирĕç тăнă.

А. И. Ананьев

Нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн Чăваш республикинчи ватă врач Ананий Иванович Ананьев вилчĕ.

Ананий Иванович 30 çул ытла врач пулса ĕçленĕ, вăл шутран 23 çулне Чăваш республикинче, Канаш хулинче ĕçленĕ.

Вăл Канашри куç чирĕнчен сыватакан больницăна организацилекенни пулнă, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне трахома чирне пĕтерессишĕн кĕрешнĕ çĕре панă. Нумай çул хушши ĕçлесе, вăл темиçе пин çынна трахомăран сыватнă, нумай операцисем туса ирттерсе, трахомăпа йывăр чирлекен çынсене сыватнă, суккăрисене куракан тунă.

Вăл призывниксене трахомăран сыватас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ, çапла вара Хĕрлĕ Çар валли таса сывлăхлă çынсем парассишĕн тăрăшнă.

Ананий Иванович Чăваш республикинче трахомăпа кĕрешес ĕçе организацилекенсенчен пĕри пулнă. Çав ĕçе мĕнле майпа йĕркелени çинчен хăйĕн наукăллă ĕçĕнче те темиçе хутчен çутатса панă. Вăл врач пулса ĕçлесе, санитари пропагандине чиртен сыватас ĕçпе çыхăнтарса пыма пĕлнĕ. Ананий Иванович, хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвĕпе вăйне халăх ĕçĕшĕн парса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, чăваш халăхĕ умĕнче пысăк авторитетпа усă курнă.

Правительство унăн ĕçĕсене пысăка хурса хакларĕ, ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ.

Ананий Ивановича РСФСР-ăн тава тивĕçлĕ врачĕ ятне панă. СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕ ăна «Отличник здравоохранения» значекпа наградăланă.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа Ананий Иванович эвакогоспиталь начальникĕ пулса ĕçлерĕ. Унта вăл Хĕрлĕ Çарăн аманнă тата чирленĕ воинĕсене лайăх та хăвăртрах сыватас тесе нумай вăй хунă.

Ананий Иванович Ананьев вилни медицина общественноçĕшĕн тата пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн пысăк çухату пулса тăрать.

Лихачев, Никитин, Чемолосов, Наумов, Шульпенкова, Васильева, Миролюбова, Гутман, Никитина, Алексеев, Кузнецов, Обухов, Грачева, Рябушкина.

Тĕрĕслесе килнĕ материалсем тăрăх

„Ялхуçалăх уставне пăсаççĕ"

Ишлей районĕнчи Чăрăшкасси ялĕнчи «XX лет Чувашии» колхозран пирĕн редакцине çакăн пек ятлă заметка килнĕччĕ. Вăл заметкăра «XX лет Чувашии» колхозри счетовод З. Шатлаевăпа кладовщик П. Семенов колхоз тыррине хăйсем ирĕккĕн усă курни çинчен çырнăччĕ. Çапла, колхоз счетовочĕ З. Шатлаева хăйĕн семьи 1944 çулхи сентябрь уйăхĕ тĕлне ĕçлесе тунă 228 ĕçкунĕ вырăнне 501 ĕçкунĕ тунă тесе çырнă та çав ĕçкунĕсемшĕн итем çинчен тÿрех тырă илнĕ.

Ишлей районĕнчи прокурор А. Филиппов юлташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, заметкăри фактсем пурте тĕрĕс пулнă. Çак аслăй колхозра счетовод пулса ĕçленĕ З. Шатлаевăпа П. Семенов кладовщикăн ĕçĕсене халь суд аллине панă.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Чăвашпотребсоюзăн Шупашкарти межрайбази ялпосемпе райпотребсоюзсене Атăл хĕрринчен тăвар панă. Тăвара купаран касса хăпартнă чухне ĕç хăрушсăрлăхĕн техникине пăхăнман пирки 1945 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче тăвар купи ишĕлсе аннă. Çапла вара тăвар айне пулса 7 çын вилнĕ, икĕ çын йывăр аманнă.

Тăвар панă çĕрте ĕç хăрушсăрлăхĕн техникине пăхăнманшăн айăплисене—Чăвашпотребсоюз президиумĕн председатель заместительне, Чăвашпотребсоюзăн сутуилÿ управленийĕн начальникĕ пулса ĕçленĕскере Г. И. Лизунова, Чăвашпотребсоюзăн Шупашкарти межрайбазин директорне Ф. Е. Мутрискова, тăвар складĕн заведующине И. Г. Шматовăна уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма суда панă.

Чăваш АССР Верховнăй сучĕ çак ĕçе кăçалхи февралĕн 26-мĕшĕнче пăхса тухнă та Г. Лизунова 3 çула, Ф. Мутрискова 10 çула тата Шматовăна 8 çула тĕрмене хупмалла тунă. Унсăр пуçне тăвар айне пулса вилнĕ Ольга Демьяновăн ачисене пăхса усрама айăплисенчен укçа шыраса илмелле тунă.

Республикăри 10-мĕш шахмат турнирĕ

Республикăри 10-мĕш шахмат турнирĕн 2-мĕш турĕнче В. Никитин Смирнова, Коновалов И. Никитина, Студенецкий Меркулова çĕнтернĕ. Афанасьевпа Беззерхний тата А. Никитинпа Каменецкий хăйсен партийĕсене выляса пĕтереймен. Икĕ тур хыççăн Каменецкий, В. Никитин тата Студенецкий малта пыраççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕ Чăваш республикинчи чи ватă врач, РСФСР-ăн тава тивĕçлĕ врачĕ, орденоносец

Ананий Иванович АНАНЬЕВ

нумай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн мартăн 4-мĕшĕнче вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

Шупашкар районĕнчи Çĕньялти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн коллективĕпе месткомĕ тата Çĕньялти пуçламĕш парторганизаци РСФСР-ăн тава тивĕçлĕ учителĕ

Степан Романович ВОИНОВ

вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ. Воинов юлташ çак шкулта 47 çул вĕрентнĕ, вăл темиçе героя вĕрентсе ÿстернĕ.

Колхоз конюхĕсене пулăшас майпа

Лаша кăрчанки çинчен мĕн пĕлмелле

Кăрчанкă (кĕçĕ) чирне саракан паразит питĕ пĕчĕккĕ, ăна ахаль куçпа курма çук.

Кăрчанкă виçĕ тĕрлĕ пулать: кĕçĕттерекенни, выльăх тирĕ çинчи тата выльăх тирне çиекенни. Çак кăрчанкăсен пыйтисем пĕр пек мар. Вĕсем пĕр-пĕринчен хăйсен пысăкĕшĕпе, пуçĕсемпе урисем тĕлĕшпе уйрăлса тăраççĕ. Кĕçĕттерекен кăрчанкăн клещĕ (пыйти) питĕ пĕчĕккĕ, выльăх тирне çиекен паразит пысăкрах, выльăх тирĕ çинчи паразит вĕсенчен пуринчен те пысăк.

Çак виçĕ тĕрлĕ кăрчанкăн пыйтисем пĕтĕмпех выльăх вăйĕпе пурăнаççĕ. Выльăхăн какайне, тирне е юнне çиеççĕ, выльăх çинчех ĕрчеççĕ, ситĕнеççĕ. Выльăх çинчен ÿксен вĕсем нумаях мар, пурĕ те темиçе кун çеç пурăнаççĕ, унтан вилеççĕ. Анчах хĕвел тивмен, сулхăн та нÿрлĕрех çĕрте чылай вăхăт хушши пурăнма пултараççĕ. Тир çинчи тата тир çиекен кăрчанкă клещĕсем (пыйтисем) вите условийĕсенче 40—60 кун пурăнма пултараççĕ, анчах та çăмарта хума тата ĕрчеме пултараймаççĕ. Аçа клещсем выльăх çине ялан лăх вырăна лексен, амисене пĕтĕлентереççĕ те савăнтах вилеççĕ. Амисем яланах амисенчен пĕчĕкрех те сахалтарах пулаççĕ, çавăнпа та вĕсене сайра тупма пулать. Пĕтĕленнĕ ама темиçе кунтан çăмарта хума тытăнать, кашни кун вăл 2—3 çăмарта хурать. Кăрчанкă паразичĕн ами хăй ĕмĕрĕнче 30—40 çăмарта хурать. Кĕçĕттерекеннисем сахалтарах, тир çинчисем нумайрах çăмарта хураççĕ.

Кашни кăрчанкăн паразичĕ выльăхăн уйрăм, юратакан вырăнсене яланлăха вырнаçать. Кĕçĕттерекеннисем ытларах лаша пуçĕпе майĕ çинче, ĕнерчĕк айĕнче тата лаша пĕççин шал енче ĕрчеççĕ, унта пурăнма юратаççĕ. Тир çинчисем лаша ĕнси çинче, çилхи айĕнче, хÿре тĕпĕнче пурăнаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, вăрăм тата çăра çăмлă вырăнсене юратаççĕ. Тир çиекеннисем вара лашан кайри урисем, хăш чухне малти урисем çинче чĕркуççинен аяларахра вырнаçаççĕ.

Лашапа ытти выльăхсен кĕçĕттерекен кăрчанки çынна та ерме пултарать. Çавăн пекех сыннăн, сурăхăн, йыттăн, кушакăн, сыснан тата кроликăн кĕçĕтерекен кăрчанки те лашана ерме пултарать. Лашан, сурăхăн, качакан, кушакăн тата сыснан кĕçĕтерекен кăрчанки майракаллă шултăра выльăх çине сикме пултарать. Йыттăн тата качакан кĕçĕтерекен кăрчанки сурăх çине сикет.

Аслăлăх статистики кăтартса панă тăрăх лашасем кĕçĕтерекен кăрчанкăпа ытларах, тир çиекен кăрчанкăпа сахалтарах чирлеççĕ. Чирĕн малтанхи тапхăрĕнче ăна пĕлме йывăртарах. Тинкерсе пăхсан кăна, лашан майĕ, пуçĕ тавраш не тата ытти хăшпĕр вырăнсене хыпашласа пăхсан, пысăках мар тĕвĕсем е кирĕк тупма пулать. Кирĕклĕ çăмсем пĕрле çыпçăнса лараççĕ, хырăнкласан вĕсем часах тăканаççĕ, вĕсен вырăнĕнче тикĕсех мар çара вырăнсем тухаççĕ. Тĕвĕсем тăррине хăмпăсем хăпараççĕ, ун хыççăн лаша тирĕ часах кирĕкленме тытăнать. Кăрчанкă чирĕ сарĕлса пынă май кирĕк нумайланса пырать. Çаралнă вырăнсен хĕррисенче пысăках мар тĕвĕсем тата кирĕк курма пулать. Кăрчанкăпа çаралнă вырăнсенчи тир хулăнланать; хускалакан вырăнсенче çаралнă пулсан, часах пĕрĕнчĕксем тата пухăнса тăракан хулăм вырăнсем те пулаççĕ; вĕсен хушшисем час-часах çуркаланаççĕ тата юн сăрхăнма тытăнать.

Кăрчанкăпа чирленĕ лашана сыватмасан, унăн пĕтĕм тирĕ çăмсăр тăрса юлать, кирĕкленсе тăракан пулать. Выльăхсене, уйрăмах ваттисене, начар тăрантарсан, йĕркеллĕ пăхмасан тата чиртен сыватма тăрăшмасан, çав вăхăтрах выльăхсем сивĕ витере тăраççĕ пулсан, вĕсем питĕ хăвăрт ырханланса вăйран каяççĕ те вилеççĕ.

Кĕçĕттерекен кăрчанкă ытти кăрчанкăсенчен хăрушăраххи пулса тăрать. Унпа кĕрешме те йывăртарах. Мĕншĕн тесен кăрчанкăн клещĕ тир çийĕнче мар, тирĕн çиелти сийĕнче пурăнать. Кĕçĕттерекен кăрчанка пĕтересси йывăртарах, çавăнпа та унпала çине тăрса тата пикенсе кĕрешмелле. Ку ĕçе ветеринарсемпе зоотехниксене явăçтармалла. Кăрчанкă пулмалла мар тăвас тата вăл пур пулсан, ăна пĕтерес ĕçре тасалăх калама çук пысăк вырăн йышăнать. Лашасене яланах хыркăласа тасатмалла, лашасем тăракан вырăна, кормушкăсене эрнере пĕрререн кая мар кĕл шывĕ вĕретсе пĕçертмелле, ун хыççăн извеçпе шуратмалла. Лаша тăракан вырăнти тислĕке кунне 2—3 хутчен тасатмалла.

Лашасене сыватас ĕçе çирĕп йĕркепе, график тăрăх туса пымалла, çак ĕçе ветеринар е зоотехник ертсе пыма тивĕçлĕ.

Лаша пăхакансене ятарласа халатсем памалла, халатсене эрнере пĕрререн кая мар дезинфекци тумалла. Чирлĕ лашан хăмăчĕсене, ĕнерчĕксене тата ытти ут таврашĕсене те дезинфекци тумалла, вĕсемпе ĕçре усă курас пулсан, эрнере пĕрререн кая мар газокамерăсенче е ятарласа майлаштарнă мунчасенче дезинфекцилесе тасатмалла.

Кăрчанкăпа чирленĕ лашасене сыватас тĕлĕшпе ĕçлекенсен питĕ сыхланса ĕçлемелле. Лашасене çунă хыççăн аллисене супăньпе тата 4 процентлă креолин е 2 процентлă лизолин растворĕпе çумалла. Тасалăх—лаша кăрчанкипе кĕрешес ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăрать. Лашасене сыватас тĕлĕшпе ĕçлекенсен тата конюхсен, çавна яланах асра тытса, витесене тата лаша сывăхĕнчи япаласене яланах таса усрассишĕн тăрăшмалла.

Конюхсен алли айĕнче кирек-хăçан та кăрчанкăпа кĕрешмелли эмел тата ятарласа тунă щетка пулмалла. Кăрчанкă чирĕ палăрсанах, çав эмеле сĕрмелле, васкасах ветеринари работникне тата зооветучастока пĕлтермелле.

Кăрчанкă — ялхуçалăхĕшĕн хăрушă чир пулса тăрать. Çак чире пула нумай лашасем стройран тухма пултараççĕ. Кăрчанкăпа кĕрешесси пысăк ĕç тата вăл пĕр конюхран кăна мар, лашапа çÿрекенсенчен те килет. Ездовойсем çул çине кайсан, хăйсен лашисене кăрчанкăпа чирленĕ лаша сывăхне е кăрчанкăллă лаша тăнă вырăна тăратмалла мар. Лашасем пухăнакан вырăнта кăрчанкăллă лашапа пĕрле пуласран сыхланмалла. Колхозра кăрчанкăллă лаша пулнишĕн кашни конюх тата колхоз руководителĕ те ответлă.

Çураки çывăхарать. Ялхуçалăхĕнчи чи паха та ответлă ĕçе—çуракине ăнăçлăн ирттерессине лаша тапса парать. Çакна астуса, кашни конюхпа ездовой, çавăн пекех кашни колхоз çуракине сывă та вăйлă, мăнтăр лашасемпе кĕтсе илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тивĕçлĕ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Ветеринари Управленийĕн главнăй врачĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—07, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 1—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31
Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000
НТ 00287